● Юбилей

Васлей
ДАВЫДОВ-АНАТРИ,
Чăваш халăх поэчĕ



***Юратнă çыннăмăр Чăваш халăх поэчĕ Василий Иванович ДАВЫДОВ-АНАТРИ кăçалхи раштавăн 26-мĕшĕнче 85 çул тултарать. "Тăван Атăл" журналта ĕçлекенсемпе унăн вулаканĕсем пултаруллă сăвăçăмăра çавра уяв ячĕпе чун-чĕререн саламлаççĕ, пултарулăх ĕçĕнче ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунаççĕ.***

# ЧЕМЕН

***Выляхансем:***

**ЧЕМЕН** - хресчен ачи, 22 çулта - тенор.

**МЕРЧЕН** - тăлăх çын, хресчен хĕрĕ, 21 çулта - лирикăлла сопрано.

**АРСАН** - куштан çын, 55 çулта - бас.

**СЎРМЕТ** - Арсан ачи, 22 çулта - баритон.

**ÇТАППАН** - кĕтўçĕ, сĕрме купăс калакан, 50 çулта - тенор.

**СЕМЕНТЕЙ** - Чемен юлташĕ, 23 çулта - баритон.

**САНЮК АППА** - Чемен амăшĕ, 50 çулта - меццо-сопрано.

**САРНАЙ ИВАНĔ** - Чемен ашшĕ, 55 çулта.

**УРИНЕ** - Арсан хĕрĕ, 25 çулта - меццо-сопрано.

**МИРОВОЙ СУТЬЕ** - баритон.

**ПĔРРЕМĔШ САЛТАК** - тенор.

**ИККĔМĔШ САЛТАК** - баритон.

**ВИÇÇĔМĔШ САЛТАК** - бас.

**ПОРУЧИК, ИВАН ИВАНЧ** - штабри офицер, 35 çулта - тенор.

**ЯККУ**
**КУРАК** — АРСАН ТАРÇИСЕМ /юрламаççĕ/.

**АНДРЕЙ** - учитель, 25 çулта - тенор.

**Оперăри ĕçсем 1914–1916 çулсенче пулса иртеççĕ.**

## *Пĕрремĕш картина*

**Ыраш пусси хĕрринчи çаран çинче. Каччăсем выртмара: савăнаççĕ-юрлаççĕ, ташлаççĕ... Кунтах Çтаппан кĕтўçĕ.**

КАЧЧĂСЕМ.
Каçхи кĕмĕл çăлтăрсем
Йăлтăртатрĕç тўпере.
Вĕсен йăлтăр çутисем
Тĕр тĕрлерĕç пĕлĕтре.
Эх, мур, самана!..
Каяр, савни, вăрмана.
Аннў çĕрле курас çук та,
Аçу пире тытас çук.

Симĕс вăрман хĕрринче
Юрра ячĕç савнисем,
Чипер ĕшне витĕрех
Ян каяççĕ кĕввисем.
Эх, мур, самана!..
Каяр, савни, вăрмана.
Аннў çĕрле курас çук та,
Аçу пире тытас çук.

Вăрманти çаран çинче
Кăтра курăк ўснĕ тет.
Ăна ватă мучисем
Тĕлĕкре кураççĕ тет.
Эх, мур, самана!..
Каяр, савни, вăрмана.
Аннў çĕрле курас çук та,
Аçу пире тытас çук.

ÇТАППАН.
Эсрелсем, эсрелсем,
Иртĕхетĕр, шăллăмсем.
Кун пек юрă юрлама
Намăс мар-и, тусăмсем?
Эх, тур çырлах, тур çырлах.

**Çтаппан аллине сулать те тĕмеске çине ларса чĕлĕм чĕртет.**

СЕМЕНТЕЙ.
Ан çиллен эс, мучи,
Эпир шўтлесе кăна.
Пĕр-пĕр юмах кала-ха:
Эс пур чухне выртмара

Кулянасси çук вара.
КАЧЧĂСЕМ.
Мучи, юмах кала-ха,
Кулмаллине пуçла-ха!
ÇТАППАН.
Юрĕ, юрĕ, эсрелсем, –
Ах, эсир чее, туссем.
Пур-ха çĕнĕ юмахсем.

**Çтаппан юмах калама пуçлать.**

ÇТАППАН.
Сĕм-сĕм хура вăрманта
Пуранна тет пĕр упа.
Утарсене çаратса
Апатланнă вăл пылпа.
Пĕрре упа-утаман
Утса тухнă чăтлăхран.
Инçе те мар, çывăхра,
Айлăм вырăн çырмара,
Пыл хурчĕсем сĕрленĕ,
Каçса кайса ĕçленĕ.
Упа-упа утаман
Савăннă çавна курсан:
Вĕллесене çурать те,
Сарă пылне çăтать те...
СЕМЕНТЕЙ.
Чим-ха, чим-ха эс, мучи,
Ура сасси илтĕнет.

**Арсан пытаннă, мĕн калаçнине итлет.**

КАЧЧĂСЕМ.
Ним те мар вăл, çил ачи,
Чупать пулĕ катаччи.
Мучи, кала малалла,
Аван юмах пулмалла.
ÇТАППАН.
Çапла упа-утаман
Пĕр тумлам пыл хăварман.
Çав вăхăтра вăрмана
Утнă пĕр çын кăмпана.
Хайхи курать, тĕлĕнет:
Упа урать, иртĕхет.
Мĕнле чăтса тăран-ха?
Чармалла-çке хураха, –
Хай çын сулать пурттине,
Татать упа хÿрине.
...Çакă кунтан упасен
Кĕске ĕнтĕ хÿрисем!

**Каччăсем кулаççĕ.**

КАЧЧĂСЕМ.
Çтаппан мучи, пултаран:
Юмах яран, култаран.

**Чемен тухать.**

СЕМЕНТЕЙ. Чемен!
Юмах эс итлеймерĕн, –
Вара ăçта çÿрерĕн?
ЧЕМЕН.
Эп утсене хуралларăм,
Арсан ырашне сыхларăм.
Мĕн тăвас тен – выртмара.
СЕМЕНТЕЙ. Упа çинчен тăнлаймарăн...
ЧЕМЕН.
Ун пек упа çакăнтах –
Пур вăл хамăр хушăрах.
ХОР.
Чемен, тĕрĕс эс калан:
Çăткăн упа вăл – Арсан!
ÇТАППАН. Пирĕн пурнăç, ай, сакки...
ЧЕМЕН. Ик айкки те тăвайкки...

**Арсан сиксе тухать.**

АРСАН /*Çтаппана*/.
Чим-ха, чим-ха!..
Камран эс кулатăн,
Юмах ярса ларатăн?

**Сÿрмет сиксе тăрать те вăрттăн тухса тарать. Арсан вăл тухса кайнине сисмест.**

АРСАН.
...Ялта ятлă пĕр пуян
Теççĕ мана ăмсанса,
Никама та пуç тайман
Эп кун чухлĕ пурăнса.
Хăвăр пăхăр шутласа:
Улма сачĕ варринче
Манăн çĕнĕ мунча пур,
Унăн лапки çийĕнче
Кĕмĕл тĕплĕ чĕрес пур.
Мунча лапки – кĕленче,
Милĕкĕ ун – пурçăнтан,
Ăшши – шерпет шывĕнчен.
Валашкийĕ – пăхăртан.
Хăвăр пăхăр шутласа:
Ман çеç кĕмĕл сăмавар.
Сирĕн умра мухтанса
Мĕншĕн пуçа йăтас мар!
Ялта ятлă пĕр пуян
Теççĕ мана ăмсанса.
Никама та пуç тайман
Эп кун чухлĕ пурăнса.

**Сÿрмет чупса кĕрет.**

СÿРМЕТ /*ашшĕне*/.
Пирĕн ыраш пуссинче
Ют лашасем çÿреççĕ,
Çÿреççĕ.
Тырра, эпир акнине,
Каçса кайсах çиеççĕ.
АРСАН. Кам лашисем?
СÿРМЕТ. Чеменĕн.
АРСАН /*Чемене*/.
Илтетĕн-и эс, Чемен,
Ак сана тăвайкки... /*Аллине çĕклет.*/
ÇТАППАН. Тăхта, тăхта эс, Арсан!
ЧЕМЕН. Суять Сÿрмет,
Ман лашасем унта çук.
ÇТАППАН. Сÿрмет çĕрĕпех çывăрчĕ, лашисене пăхмарĕ.

**Сÿрмет тухса тарать. Çамрăксем кулаççĕ.**

АРСАН. Мĕн? Мĕн?
ÇТАППАН. Халь ытлашши çывăрнипе хăй лашисене паллаймарĕ пулас.
АРСАН. Ку вара чăнах-ши?
ЧЕМЕН. Кай та кур.
ХОР /*кулаççĕ*/.
АРСАН. Эх, мур илесшĕ.
ХОР /*кулаççĕ*/.

**ЧАРШАВ**

## *Иккĕмĕш картина*

**Ял çумĕнче. Кÿлĕ хĕрринче. Ирхине Чемен Мерчене тĕл пулать. Мерчен кÿлĕ хĕррине шыв ăсма аннă-мĕн. Каччă ăна курсан пытанарах тăрать.**

МЕРЧЕН.
Сывлăмлă кун тап-таса,
Çăлран юхан тăр шыв пек.
Сенкер тÿпе çуталса
Вылять ирхи илемпе.
Çавра кÿлĕ ялкăшать
Ылтăн хĕвел сутипе.
Уçă сывлăш варкăшать
Ăшă çилĕ вĕрнипе.
Селĕм юрă шăратать
Сарă кайăк савăнса.
Чăпар куккук авăтать
Сăр вăрманне янратса.
Çапла ĕнтĕ, ыр тĕнче,
Йăпататăн эс пире.
Çуратататăн куллен-кун –
Çутă шанчăк чĕрере.

**Чемен тухать.**

ЧЕМЕН. Мерчен!..
МЕРЧЕН. Чемен!..
ЧЕМЕН.
Мерчен, пăхсам тинкерсе:
Сăну вылять шыв çинче.
МЕРЧЕН. Мĕн çăмăлпа эс ирех
Çÿрен кÿлĕ хĕрринче?
ЧЕМЕН. Эх, Мерчен, Мерчен...
МЕРЧЕН. Итлетĕп.
ЧЕМЕН. Сана каламалли пурччĕ ман.
МЕРЧЕН. Кала.
ЧЕМЕН.
Анчах пĕрле пулсанах
Çухалать-çке çав сăмах.
МЕРЧЕН. Чăнах-ши, Чемен?..
ЧЕМЕН. Те хăяйманнипе, те именнипе...
МЕРЧЕН. Чăнах-ши, Чемен?
ЧЕМЕН. Те именнипе...
МЕРЧЕН. Чăнах-ши, Чемен?
ЧЕМЕН. Эс мана ĕненместĕн пулмалла, Мерчен.
МЕРЧЕН. Мĕнле калас...
ЧЕМЕН.

Сана эпӗ, эх, Мерчен,
Мӗн ачаран пӗлетӗп,
Анчах чунтан–чӗререн
Акӑ халь тин пуплетӗп.
Хире тухрӑм, хир куртӑм,
Ешӗл хурӑн тӗл пултӑм.
Кунта килтӗм, хӗр куртӑм –
Мерчен, сана тӗл пултӑм.
Мерчен,
Эп сан сӑнна
Асӑмрах усрарӑм.
Манӑн ҫамрӑк чӗремре
Эс ҫӑлтӑр пек ҫуталтӑн.
Хире тухрӑм, хир куртӑм,
Ешӗл хурӑн тӗл пултӑм...
Анчах мӗншӗн ютшӑнатӑн,
Каҫхине вӑййа тухмастӑн –
Каласамччӗ сӑлтавне.
МЕРЧЕН. Те хӑяйманнипе...
ЧЕМЕН. Мерчен...
МЕРЧЕН. Те именнипе...
ЧЕМЕН. Ма кулан-ши эс,
Мерчен?
МЕРЧЕН. Хӑяйманнипе.
Ха-ха-ха!
Тӑхта-ха:
Сан аннӳ кунта килет.
Курсан аван мар.
Ман каяс пуль. Сывӑ пул!

**Мерчен васкаса тухса каять.**

ЧЕМЕН.
Нимӗн те ӑнланаймарӑм,–
Мӗн каларӑн эс, Мерчен?

**Чемен амӑшӗ Санюк аппа тухать.**

САНЮК АППА. Ӑста кӑна ҫитсе тухмарӑм...
Эс тата ӑҫта ҫӳрен?
Утсене Сементей леҫсе
хӑварчӗ –
Ку тата мӗне пӗлтерет?
Писиххи сана, писиххи!
Арсан тарҫисем сана шыраҫҫӗ.
Асӑрханса ҫӳре.

**Чеменпе Санюк аппа тухса каяҫҫӗ. Мерчен шыв ӑсса тухать те витрисене лартать.**

МЕРЧЕН. Сана куртӑм вӑйӑра
Хӗрӗх ача хушшинче.
Чемен, юлтӑн асӑмра,
Юлтӑн чӗрем варринче.
**ЧАРШАВ**

## *Виҫҫӗмӗш картина*

**Ял хӗрринче. Каҫ пулса килет. Ҫамрӑксем вӑййа пуҫтарӑнаҫҫӗ. Вӑйӑ–кулӑ кӗрлесе тӑрать. Ҫтаппан сӗрме купӑс калать. Мерчен те кунта.**

ХӖРСЕМПЕ КАЧЧӐСЕМ.
Атьӑр, хӗрсем, утар-и,
Утар хӗрне ҫитер-и.
Ҫав утарта мӗскер пур –
Икӗ сарӑ каччӑ пур.
Ҫак ик каччӑ мӗн ыйтаҫ –
Икӗ чипер хӗр ыйтаҫ.

**Хӗрсем пӗр енне, каччӑсем тепӗр енне уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Ташӑ пуҫланать.**

ХӖРСЕМ.
Ҫерем пӑсса вир акрӑм...
КАЧЧӐСЕМ.
Эпир ӑна таптатпӑр.
ХӖРСЕМ.
Эсир мӗнпе таптатӑр?
КАЧЧӐСЕМ.
Кӗтӳ кӗртсе таптатпӑр.
ХӖРСЕМ.
Эпир ӑна тытатпӑр.
КАЧЧӐСЕМ.
Эсир мӗнпе тытатӑр?
ХӖРСЕМ.
Чӗн йӗвенпе тытатпӑр.
КАЧЧӐСЕМ.
Йӗвен ӑҫтан тупатӑр?
ХӖРСЕМ.
Пин сум парса илетпӗр.
КАЧЧӐСЕМ.
Пин сумӑр та кирлӗ мар.
ХӖРСЕМ.
Сире тата мӗн кирлӗ?
КАЧЧӐСЕМ.
Пире хитре хӗр кирлӗ...

**Пурте ташлаҫҫӗ.**

ХӖРСЕМПЕ КАЧЧӐСЕМ.
Ҫерем пӑсса вир акрӑм,
вир акрӑм.
Вирӗ пулчӗ пӑрҫа пек,
пӑрҫа пек.
Эпир вӑййа тухсассӑн,
тухсассӑн,
Юрӑ янрать шӑнкӑрав пек.

**Хӗрсемпе каччӑсем юрласа тухса каяҫҫӗ.**

ХӖРСЕМ.
Атьӑр, хӗрсем, утар-и,
Утар хӗрне ҫитер-и?
КАЧЧӐСЕМ.
Ҫав утарта мӗскер пур?
Икӗ сарӑ каччӑ пур.
Ҫав ик каччӑ мӗн ыйтаҫ?
Икӗ чипер хӗр ыйтаҫ.

**Мерчен юлать. Вӑл пӗччен, Чемене кӗтет.**

МЕРЧЕН.
Эх, савнӑ тусӑм,
эс ӑҫта-ши?
Ма халь те килместӗн,
Каҫсерен вӑййа тухманшӑн
Мана кӳренетӗн...

**Чеменпе Сементей васкаса тухаҫҫӗ, Чемен ҫӳҫӗ–пуҫӗ арканнӑ. Вӑл суранланнӑ ҫамкине тытӑрпа ҫыхнӑ.**

МЕРЧЕН.
Чемен! Чун савниҫӗм!
Мӗн пулнӑ тата?
Кам сана амантнӑ?
ЧЕМЕН. Вӑл нимех те мар...
МЕРЧЕН. Каласамччӗ...
ЧЕМЕН.
Мерчен, каҫар мана,
Ҫитеймерӗм вӑхӑтра.
СЕМЕНТЕЙ.
Эсир калаҫӑр. Эп каям:
Мана кӗтеҫҫӗ вӑйӑра.

**Сементей тухса каять.**

МЕРЧЕН /Чемене/. Мӗншӗн тата... Кам сана?

**Ҫтаппан тухни курӑнать. Вӑл пӗр тунката ҫине ларать те сӗрме купӑс калама пуҫлать.**

ЧЕМЕН.
Нимех те мар, Мерчен:
Тӳрленет туй пуличчен
Тенӗ пирӗн ваттисем.

ЧЕМЕНПЕ МЕРЧЕН.
Чупрӑм антӑм ҫырмана
Кӗмӗл укҫа пуҫтарма.
Кӗмӗл укҫа пичетсӗр, –
Пирӗн ӗмӗр телейсӗр.
Атте хапхи умӗнче
Ҫӗр чӑтайми чул выртать.
Ҫӗр чӑтайми чул мар вӑл, –
Эпир чӑтас нуша вӑл.

**Ӳсӗр Сӳрметпе унӑн тусӗсем, Куракпа Якку, тухаҫҫӗ.**

СӲРМЕТ /*кулса, йӗкӗлтесе*/.
Ак, кунта-ҫке ҫерҫисем,
Нумай пулать курманни!
ЧЕМЕН. Ху ҫулупах эс уттар!
МЕРЧЕН. Ҫитет! Пире ан ҫунтар!
ҪТАППАН. Пуян ачи теейсе
Ҫӳрен ялан иртӗхсе!
СӲРМЕТ.
Мӗн палкаҫҫӗ-ха вӗсем!
Илтрӗр-и?
Апла иккен!
Паян сана вӗрентни
Сахал пулчӗ-им, Чемен?!
Ай-ай, Мерчен, ай, Мерчен,
Кун пек вара аван мар:
Ман евчӗсем пыриччен
Килне-ҫуртна эс пуҫтар!

*/Çтаппана/*

Эсĕ тата, ват сухал,
Кĕтӳре çӳрекенни,
Юмах çапма пĕлекенни,
Сĕрме купăсна юса!
Халех юса купăсна,
Кирлĕ пулан эс мана!
Часах акă ман туйра
Ташлаттарăн ял-йыша.

**Сӳрмет Мерчене ярса илесшĕн, Чемен ăна тытса чарать.**

МЕРЧЕН.
Ан çыпçăн,
Кай кунтан, –
Хăрамастăп эп санран!
СӲРМЕТ. Ха-ха-ха!
Хăрамастăп тен манран.
Асту! Алла çакланан,
Ун чух вара чăт мана!
МЕРЧЕН */Сӳрмете/*. Кай!
ЧЕМЕН. Ан çыпçăн! Чарăн!
Эсĕ ялан ашкăнан,
Куштанупа хăратан!
СӲРМЕТ. Апла иккен!
Итле эп каланине.
ЧЕМЕН. Кай кунтан!
СӲРМЕТ.
Эс ан хапсăн Мерчене –
Ăна сана парас çук,
Эп çын кулли пулас çук!
МЕРЧЕН. Чарăнăр!
СӲРМЕТ. Ак сана!

**Сӳрмет Чемен çине сиксе ӳкет. Ун тусĕсем, Куракпа Якку, Чементен кулма, ăна хĕнеме пуçлаççĕ.**

МЕРЧЕН. Чарăнăр! Мĕн хăтланатăр?
СӲРМЕТ */Чемене çапать./* Ак сана!

**Чемен тайăлса каять.**

МЕРЧЕН.
Пулăшăр! Пулăшăр, тантăшсем!
Пулăшăр, тантăшсем!

**Халăх пуçтарăнать.**

ХОР. – Мĕн пулнă?
–Кам чĕнет?
–Мĕн пулнă? Кам чĕнет?!
–Кама пулăшас?
–Кам тата?!

**Сӳрметпе унăн тусĕсем тараççĕ.**

СЕМЕНТЕЙ. Тарчĕç хайхи куштансем!
ЧЕМЕН. Каçармастăп эп ăна!
СЕМЕНТЕЙ. Ан васка!
МЕРЧЕН. Чемен, ан васка!
ЧЕМЕН. Вĕсем пиртен кулаççĕ,
Çын вырăнне хумаççĕ.
Чĕрем çунать – чăтма çук!
СЕМЕНТЕЙ. Тăхта, Чемен.
МЕРЧЕН. Тăхта, Чемен!
СЕМЕНТЕЙ.
Тен, хăрушă япала
Сиксе тухма пултарĕ.
МЕРЧЕН.
Тен, хăрушă япала
Сиксе тухма пултарĕ.
СЕМЕНТЕЙ.
Ан васка, ан васка!
ЧЕМЕН. Çук, каçармастăп! Ан чарăр мана!

**Чемен çав тери тарăхса, васкаса тухса каять.**

МЕРЧЕН.
Ах, Чемен, Чемен,
Итлемерĕн иккен.

**Мерчен кулянать. Аякра юрă илтĕнет.**

ХОР. Атьăр, хĕрсем, утар-и,
Утар хĕрне çитер-и?
Çав утарта мĕскер пур?..

**Юрă ăнсăртран татăлать. Чан çапни илтĕнет. Пушар тухни курăнать. Сементей килсе кĕрет. Халăх шавлать.**

СЕМЕНТЕЙ. Ак вăл – инкек!
Ак вăл – инкек, инкек!
МЕРЧЕН. А-а-ах!

**ЧАРШАВ**

## *Тăваттăмĕш картина*

**Ял варринче, хурал пӳрчĕ çумĕнче, Арсанпа ун майлă çынсем хăйсем тĕллĕн Чемене суд тума пухăннă. Чемен килте çуккине кура ун ашшĕ Иван мучи ларать. Ăна сенĕк тытнă икĕ çын сыхлать. Санюк аппа тухать. Мăшăрне пулăшма тăрăшать, анчах ăна куштансем тĕртсе яраççĕ.**

КУРАК. Ан шавлăр, ял-йышсем, ларăр.
АРСАН. Пуçлар, тăвансем, суд пуçлар. Якку, лар та çыр: пĕрремĕшĕ: "Мăн Арапуç çынни, Чемен, Арсан патне тарçа кĕме шутланă..."

**Çав вăхăтра кунта Хусанта университет пĕтернĕ Андрей тухать. Ун аллинче хăваран тунă шурă чăматан. Вăл кунта учительре ĕçлеме килнĕ–мĕн.**

АРСАН. "Анчах Арсан васкаман, тăхтанă. Чемен ăна çилленнĕ те усал шухăш тытнă: вара Арсан кил-çуртне веçех çунтарса яма шутланă".
КУШТАНСЕМ. Çунтарса яма шутланă. Арсан çунса кайма пултарнă...
ХĔРАРĂМСЕН ХОРĔ. Эй! Эй!
АРСАН. "Çавăнпа Чемен кил-çуртне туртса илес те Арсана парас", – те.
САНЮК АППА. Пĕлтĕрхи улăма çунтарнăшăн кил-çурта туртса илесшĕн.
АРСАН. "Ашшĕпе амăшне килтен кăларас", – те.
САНЮК АППА. Намăссăрсем!
КУРАК. Ан шавлăр!
АНДРЕЙ. Эсир кунта мировойсăрах суд тăватăр-и? Ун пек юрамасть вĕт-ха.
САНЮК АППА */четвĕрт кĕленчи çине кăтартса/*. Çак кĕленчери эрех айăплать кунта.
АРСАН */Андрее/*. Эс кам пулатăн? Мĕншĕн эп сана палламастăп?
АНДРЕЙ. Эп сирĕн шкулти учитель.
АРСАН. Апла иккен. Ăçтан килтĕн?
АНДРЕЙ. Хусантан.
КУРАК. Ан шавлăр, чарăнăр!
АРСАН */Андрее/*.
Мировой çапла каларĕ:
Ку ĕçе эсир ял-йышпа сӳтсе явăр.
Халăх сучĕ пултăр терĕ.
ПĔР ХРЕСЧЕН. Эх, суять!
АРСАН. Халăх сучĕ. Манăн хулана каймалла пулать терĕ. Якку çыр малалла...
АНДРЕЙ. Тăхтăр-ха, çак ватă çын çунтараканнийĕ–и вара?
ХĔРАРĂМСЕН ХОРĔ. Суйса айăплать.
АРСАН. Çук, унăн ывăлĕ Чемен. Халь вăл таркăнра çӳрет теççĕ. Урăх япала. Çавăнпа ĕнтĕ ашшĕне кунта илсе килмелле пулчĕ.
ХĔРАРĂМСЕН ХОРĔ. Сутье кăна айăплать.
АНДРЕЙ.Ун пек юрамасть вĕт-ха. Юрамасть!

**Халăх шавлама пуçлать.**

АРСАН. Э-э, пире юрать.
КУРАК. Ан шавлăр.
АРСАН. Малалла çыр, Якку. */Андрее калать./* Лар эсĕ, учитель, лар.
АНДРЕЙ. Ăçта лармалла?
АРСАН. Ăçта тăран, çавăнтах лар. */Яккăва калать./* Малалла çыр. "Чемене ирĕке янăшăн, алăра лайăх тытманшăн Чемен ашшĕне, Сăрнай Иванне, аллă хутчен хулăпа çапмалла пулать", – те.
САНЮК АППА. Ак тата мĕн

шутласа кăларнă куштансем.

ХĔРАРĂМСЕН ХОРĔ. Ах, тур çырлах.

АРСАН. Халех çапмалла тăвас.

КУШТАНСЕМ. Çапас...

АНДРЕЙ. Кусем пурте ăс çухатнă пулмалла.

ХĔРАРĂМСЕН ХОРĔ. Ах, тур çырлах, тур çырлах.

**Куштансем Ивана тытаççĕ те хурал пÿрчĕ хыçне илсе каяççĕ. Андрей вĕсене тытса чарасшăн, анчах та куштансем ăна тĕртсе яраççĕ.**

ХĔРĂРĂМСЕН ХОРĔ.
Ах, тур, çырлах, тур, çырлах.
Тискер çынсем, куштансем...

КУШТАНСЕН ХОРĔ. Çапла вĕрентмелле çунтаракансене.

ХĔРАРĂМСЕН ХОРĔ. Ах, тур çырлах!

**Шăнкăравлă лаша ури сассисем илтĕнеççĕ. Кунта Мировой сутье, Чеменпе Сементей васкаса кĕреççĕ.**

МИРОВОЙ СУТЬЕ. Чарăнăр! Эсир кунта мĕн хăтланатăр?

**Хулăсем тытнă куштансем тÿрех тараççĕ. Ыттисем хуллен, пĕрерĕн-пĕрерĕн туха-туха каяççĕ. Сÿрмет четвĕрт кĕленчине йăтса тарать. Чемен ашшĕ, Сăрнай Иванĕ, Мировой умне чĕркуçленсе ларать. Мировой ăна ура çине тăма пулăшать.**

САНЮК АППА. Тавах сана, Сементей, Мировоя илсе килнĕшĕн.

СЕМЕНТЕЙ. Эпир Чеменпе паян ирех çула тухрăмăр. Куштансем усал ĕç тăвассине пире пĕлтерчĕç. Хире тухсан куратпăр – куштансем çула сыхлаççĕ. Вара эпир кукăр-макăр çулпала вăрман урлă вĕçтертĕмĕр вулăса. Тавах Турра – Мировой килтех пулнă.

МИРОВОЙ СУТЬЕ. Сана, Арсан, ултавлă та киревсĕр ĕçсем тунăшăн халех арестлетĕп. Сана малашне мĕн тумалли çинчен çÿлти пуçлăхсем шутлаччăр.

АРСАН. Мана мар, Чемене хупмалла. Вăл манăн кил-çуртта çунтарса янă.

МИРОВОЙ СУТЬЕ. Кама суян? Халь кăна эпир Сементейпе санăн кантур пек çурту умĕнчен иртсе килтĕмĕр. Ларать чиперех. Эс пĕлтĕрхи улăмшăн хурланатăн пулас.

**Икĕ полицейски Арсана арестлеççĕ те илсе каяççĕ.**

ЧЕМЕН. Каçар, аттеçĕм, каçар. Каçар, аннеçĕм, каçар. Каçарăр, ял-йышсем, каçарăр!

САНЮК АППА. Сана пула аçупа халăх умĕнче намăс куртăмăр. Пушă кирлĕ сана, пушă!

**Мерчен Чемен патне васкаса пырать.**

МЕРЧЕН. Ах, Чемен, Чемен!

ЧЕМЕН. Эпĕ йăнăш турăм пуль.

МЕРЧЕН.Итлемерĕн.

ЧЕМЕН. Мана пурте ятлаç пуль.

МЕРЧЕН. Итлемерĕн эс мана, Чемен.

**Кунта çав вăхăтра пакет йăтнă пĕр çын килсе тухать те пакетне Мировоя тыттарать.**

МИРОВОЙ СУТЬЕ. Шăпланăр! Итлĕр! Германи пирĕн çĕршыва хирĕç, Раççее хирĕç, вăрçă пуçланă. Камăн салтака кайма вăхăт çитнĕ, халех пурте пуçтарăнăр.

ХОР. Тата мĕн курмалла?

АНДРЕЙ */хăй аллинчи хутсене Мировоя кăтартса/.* Манăн ĕнтĕ мĕн тумалла?

МИРОВОЙ СУТЬЕ. Сан та, шăллăм, салтака кайма хатĕрленес пулать. Вăрçă пуçланнă. Хăрушă вăрçă!

ЧАРШАВ

# *Пиллĕкмĕш картина*

**Фронтра. Çĕр пÿртре. Кĕтесре, кăмакара, вут çунать. Салтаксем тăлисене типĕтеççĕ, шинель-тумтирсене юсаççĕ.**

САЛТАКСЕН ХОРĔ.
Кăвак пĕлĕт килет капланса,
Урăм-сурăм тăман тустарать.
Çутçанталăк чунтан хурланса
Кулянать, куççульпе макăрать.
Кĕтеç пулĕ пире савнисем,
Кĕтеç пулĕ пире тăвансем.
Чĕрече те уçса пăхаç пуль,
Ачисем ашшĕне кĕтеç пуль.

ЧЕМЕН.
Чĕрече те уçса пăхаç пуль,
Ачисем ашшĕне кĕтеç пуль...
Ах, каймасть тăван ял асăмран,
Ăста эсĕ çÿрен-ши, Мерчен?
Çамрăк чун çулăмпах çунать ман
Шухăшла-шухăшла сан çинчен.

СЕМЕНТЕЙ. Эп туятăп, Чемен:
Шухăшпа тертленен.
Саншăн, мĕн калас тен,
Хакли çук Мерченрен.
Ме, тытсам шурă хут,
Çыру çыр тепĕр хут.
Ăна пирĕн яла,
Май тупса, ямалла.

ЧЕМЕН.
Усси çук пуль, Сементей:
Эп çырнине илеймест пулмалла,
Мерчен.
Илеймест пулмалла.

СЕМЕНТЕЙ.
Эх, Чеменçĕм, мĕн тăвас,
Чуна мĕнле лăплантарас?
Çухатрĕç пуль килтисем,
Ял-йыш, атте-аннесем.

ХОР. Çиллĕ тăвăл тухсан
вăрманта
Мĕн чул йывăç ÿкет, йăванать.
Ах, çаплах-çке хаяр вăрçăра
Çын вилет, вĕçĕмрен тăкăнать.

**Çĕр пÿрте штабăн офицер-поручикĕ Иван Иванович кĕрет. Сементей команда парать.**

СЕМЕНТЕЙ. Встать!.. Смирно! Господин поручик, разведчики...

ПОРУЧИК. Вольно. Вольно.

СЕМЕНТЕЙ. Вольно!

**Салтаксем команда хыççăн ирĕклĕн утса çÿреççĕ. Хăшĕсем лараççĕ.**

ПОРУЧИК. Чăваш ачисем çакăнта терĕç те, кĕрсе курас терĕм. Тата дивизи командирĕ генерал мана тава тивĕçлĕ ĕç пачĕ. Çак приказа чăвашла куçар та вуласа пар терĕ. Итлĕр приказа: "Чемен Иванов салтака разведкăра паттăрлăх кăтартнăшăн, чунне шеллемесĕр тăрăшнăшăн Георгий хĕресĕпе наградăлас тата унтер-офицер ятне парас, киле кайса килме пĕр эрнелĕх ирĕк парас. Дивизи командирĕ Воронцов генерал". Çак пысăк наградăпа эпĕ сире пурне те саламлатăп.

САЛТАКСЕМ. Служим Отечеству!

ПОРУЧИК. Тĕрĕс калатăр, çаплах.

ПĔРРЕМĔШ САЛТАК. Каçарăр, поручик господин. Эсир ăçтисем пултăр?

ИКĔМĔШ САЛТАК. Эсир хамăр енчисемех-им?

ВИÇÇĔМĔШ САЛТАК. Чăвашла лайăх пĕлетĕр...

ПОРУЧИК. Мана Иван Иванч тесе чĕнеççĕ. Чăвашсем хушшинче икĕ çул çĕр виçекен пулса çÿрерĕм. Чăвашла вĕрентĕм, юрăсем итлерĕм. Пĕр юрă халь те асрах.

ПОРУЧИК */юрлать/.*
Шĕшкĕ тăрăх, ай, шыв юхать –
Три-лю-ли Елисавец...
Малалла астумастăп.

ПĔРРЕМĔШ САЛТАК */купăс калакан салтака/.*
Эх, тăсса яр-ха купăсна.

**Пĕрремĕш салтак юрлама пуçлать.**

Кăвакалĕ чăмать-ши,

Чăмсан калле тухать-ши?
Пире савни савать-ши,
Савсан кĕтсе тăрать-ши?..
САЛТАКСЕН ХОРĔ.
Эх, юрату, юрату,
Вăл вĕт йӳçĕ, питĕ йӳçĕ,
Çырла мар.
Юратусăр çĕр çинче
Пурăнма та кирлĕ мар.

**Салтаксем ташлама пуçлаççĕ.**

ПĔРРЕМĔШ САЛТАК.
Çаран çинчи утă купи
Тулса çитнĕ уйăх пек.
Пире кĕтен савнисем
Пиççе çитнĕ çырла пек.
САЛТАКСЕН ХОРĔ.
Эх, юрату, юрату,
Вăл вĕт йӳçĕ, çырла мар.
Юратусăр çĕр çинче
Пурăнма та кирлĕ мар.

**ЧАРШАВ**

## *Улттăмĕш картина*

**Арсан кил-çурчĕ. Чӳречерен сад пахчинчи йывăççем курăнаççĕ. Ирхи хĕвеллĕ кун. Сӳрмет Яккупа Курака вĕрентет: «Ку ĕçе хăвăрт, никам сисмелле мар тумалла», - тет. Тарçисене эрех ярса парать. Лешсем: «Тур пулăштăр», - тесе эрехе çавăнтах ĕçсе яраççĕ.**

СӲРМЕТ. Урампа мар, сад пахчи урлă кайăр. Сире никам та ан куртăр. Халăх хирте тыр вырать, Мерчен вырса пĕтернĕ, килтех пулма пултарать. Ан манăр: эсир ярса тытсанах вăл кăшкăрма пултарать. Халăх хирте чухне яра парăр...

**Тарçисем, виççĕшĕ те, васкаса тухса каяççĕ. Кăшт тăхтасан хулара пурăнакан Арсан хĕрĕ Урине килсе кĕрет.**

УРИНЕ */юрлать/.*
Атте килĕ, тăван кил,
Кĕтсе илтĕн эс мана.
Кĕтсе илтĕн-ши вара,
Ăшăтайрăн-ши чуна?
Эх, тăван кил...
Тăван килĕм, тăван кил,
Яланах эс асăмра.
Анчах унтан сивĕнни
Канăç памасть чунăма.
Ай, тăван кил...

**Сӳрмет кĕрет.**

СӲРМЕТ.
Ак, тамаша, телей пулатех -
Урине аппа та çитрĕ.
УРИНЕ. Мĕнле телей тата?
Çынсем вăрçăра тертленеççĕ.
Эсĕ тата телей çинчен шухăшлатăн.
СӲРМЕТ. Айван çын эс, Урине, айван çын. Пире вăрçа илсе каякан çынна пĕр хутаç укçа тыттартăм та - килелле вĕçтертĕм. Атте тата ытлашши калаçакансене пĕр витре эрех лартса пачĕ. Вара ĕçĕ пĕтрĕ, пурте шăпланчĕç...
УРИНЕ. Тата мĕнле телей кĕтет сана?
СӲРМЕТ. Яккупа Курак часах Мерчене сĕтĕрсе килеççĕ.
УРИНЕ. Сĕтĕрсех-и вара?
СӲРМЕТ. Йăтса-и, çавăтса-и, çавах мар-и?
УРИНЕ. Ак мĕнле эс иккен юрататăн Мерчене.
СӲРМЕТ. Юрату вăл юмахра, пурнăçа саламат тытса тăрать.
УРИНЕ. Мерченĕн юратнă каччи пур - Чемен. Вăрçăран таврăнсан сана вăл каçармасть.
СӲРМЕТ. Халь вăл таçта. Алли кĕске. Çаплах çырусем çырать. «Юратнă Мерченĕм», - тет. Ак вĕсем пурте манăн аллăмра. */Аллипе çӳлелле йăтса Чемен çырăвĕсене кăтартать/.*
УРИНЕ. Эх, эс мĕнле çын пулса тăтăн, Сӳрмет! Намăссăр, пӳтсĕр, пурăнăр саламатпах! Сирĕн мăшкăлăра тӳсеймесĕр ман пата анне те тарса пычĕ. Сирĕнпе намăс куриччен каятăп хулана. Анне кĕтет мана, кĕтет!

**Урине япалисене пуçтарать те килĕнчен тухса кайма тăрать. Хăйпе пĕрле илсе килнĕ тĕрлĕ парнесене, çилленсе, Сӳрмет еннелле ывăтса перет.**

СӲРМЕТ. Тăхта, Урине аппа, тăхта!

**Урине тухса каять. Хирĕç питех те кӳреннĕ Арсан кĕрет. Вăл пуçне ярса тытнă: пăлханни сисĕнет.**

АРСАН. Тĕрĕсех тăватпăр-ши, ывăлăм? Урине те çилленсех тухса кайрĕ. Çавăнпа ман ăш вăркать. Евчĕсем ярса калаçса татăлсан - шанчăклăрах пулĕччĕ. Эп каланине итлемерĕн. Ăнсăртран пысăк инкек сиксе тухма пултарать.
СӲРМЕТ. Ан хăра, атте, ан кулян.

**Куракпа Якку шăналăкпа чĕркенĕ, кантрасемпе çыхнă Мерчене йăтса кĕреççĕ. Шăналăкне сирсе, кантрасене салтса Мерчене тенкел çине лартаççĕ. Хăйсемех сыхлаççĕ.**

**Вĕсем хыççăнах сĕрме купăс тытнă çамрăк чикан хĕрарăмĕ килсе кĕрет. Ун аллинче - сĕрме купăс. Чикан хĕрарăмĕ Мерчен ал тупанне тытать, юмăç пăхма тытăнать, тĕрлĕ сăмахсем каласа хĕр пуçне çаврăрма тăрăшать. Мерчен ун сăмахĕсене итленипе сĕнк пулса каять. Чикан хĕрарăмĕ Мерчен тавра çаврăна-çаврăна ташлама пуçлать. Ташă вĕçĕнче каллех Мерчен патне пырать. Мерчен ăна тĕртсе ярать.**

**Мерчен патне Сӳрмет васкаса, чупсах пырать.**

СӲРМЕТ. Апла иккен. Халь итле атте сăмахне.
АРСАН. Апла-тăк ил-ха эс çакна. */Сӳрмете саламат тыттарать/.* Çирĕп тыт эс арăмна!
СӲРМЕТ. */Мерчене чаршав хыçне илсе кĕрет/.* Ме сана! Ме сана! Ме сана!

**Сӳрмет Мерчене чаршав хыçĕнчен каялла илсе тухать.**

СӲРМЕТ. Сан каялла пурпĕрех çул çук. Халь хăвăн юрруна юрлама пултаран каç пуличченех.

**Çав вăхăтрах Арсан килне халăх пуçтарăнма пуçлать.**

МЕРЧЕН */юрлать/.*
Ирхи кӳлĕм иртет-мĕн,
Каçхи кӳлĕм килет-мĕн.
Çамрăк ĕмĕр иртет-мĕн,
Ват ĕмĕре кĕрет-мĕн.
Ах, аттеçĕм, аннеçĕм,
Мана мĕншĕн çуратрăр?
Пĕрре те çук телейĕм,
Çунать тăлăх туратăр.
Ах, чун савниçĕм, эс ăçта?
Ах, çунать саншăн ман чĕре.
Курас çук-шим, курас çук-шим
Эп сана, хам юратнă çыннăма?

**Мерчен юрланă вăхăтра кунта ялти каччăсемпе пĕрле Чемен унтер-офицер килсе кĕрет.**

ЧЕМЕН. Мерчен!
МЕРЧЕН. Чемен!

**Чеменпе Мерчен çав тери васкаса пĕрле тухса тараççĕ.**

**Сӳрмет сĕтел çинчен çĕçĕ илет те Чеменпе Мерчен хыççăн чупать. Анчах ун çулне Çтаппан пӳлсе лартать. Сӳрметĕн çĕççи Çтаппана лекет. Çав вăхăтра кунта Чемен амăшĕ Санюк аппа пырса кĕрет.**

САНЮК АППА. Савăнатăр, ирсĕрсем, вуник пуçлă çĕленсем, ман мăшăра хĕнетĕр, халь Çтаппана пĕтертĕр. Ылханатăп эп сире - çитет асса пурăнма. Ылханатăп.!
ХАЛĂХ ХОРĔ. Айăпсăрах çынна вĕлерчĕç, ылханатпăр сана, Арсан! Ылханатпăр!

**ЧАРШАВ**